27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
17
ВЫРСАРНИКУН
184(6679) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Халăха çар ĕçне вĕрентни— Хĕрлĕ Çар вăй-хăватне ӳстерни

Пирĕн тăван çĕршыв вăрçăн йывăр тĕрĕслевне тӳссе ирттернĕ тапхăрта, 1941 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕнче Оборонăн Государственный Комитечĕ СССР граждăнĕсене пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси çинчен постановлени йышăнчĕ. Ыран çав историллĕ постановлени тухнăранпа виçĕ çул тултарать.

Совет Союзĕнчи граждăнсене пурне те çар ĕçне вĕрентесси çинчен йышăннă постановлени совет çыннисен шухăш-кăмăлне, туйăмне палăртса тăрать. Совет халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн алла хĕçпăшал тытса пĕр хутчен кăна мар ĕнтĕ çапăçать. 1918 çулта, кайзерла Германи империалисчĕсен хĕçпăшаллă кĕтĕвĕсем çамрăк совет республики çине тапăнса килнĕ вăхăтра, халăха çар ĕçне массăллăн вĕрентнĕ никĕс çинче тунă советсен хĕçпăшаллă вăйĕсем нимĕçсен войскисене Нарвăпа Псков хулисем патĕнче çапса аркатнă. 1918 çулти апрель уйăхĕнче вара, Ленин сĕннипе, пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси çинчен декрет кăларнă. Всевобуч системинче вĕрентсе хатĕрленĕ рабочисен полкĕсем граждăн вăрçи çулĕсенче çамрăк республикăн мĕнпур тăшманĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкнă çĕрте паллă вырăн йышăннă.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче те, Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленине пурнăçа кĕртсе пырса, нумай миллион совет граждăнĕсене всевобуч [illegible]

[illegible]

хăйсен вилĕм сехетне тăсасшăн хаяррăн çапăçаççĕ, контратакăсем тăваççĕ. Тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатас тесен, вăй-хăвата ӳстерсе ĕçлемелле. Сталин юлташ: вăрçă мĕнле вĕçленессине татса паракан факторсенчен пĕри вăл — дивизисен хисепĕпе пахалăхĕ пулса тăрать, тесе вĕрентет. Дивизисен хисепĕпе пахалăхĕ чылай чухне всевобуч пункчĕсен ĕçĕнчен, халăха çар ĕçне вĕрентессине массăллăн сарса пынинчен килет. Апла пулсан, халăха çар ĕçне вĕрентессине пур майсемпе те лайăхлатса пымалла.

Вăрçă кашни кунах çар наукине çĕнĕ те çĕнĕ улшăнусем кĕртет. Всевобуч работникĕсен тивĕçĕ — вĕренӳпе воспитани ĕçне вăрçă опычĕ кăтартнă пек йĕркелесси пулать. Çавăн пек тума командирсем хăйсен квалификацине вăрçă опытне вĕренсе пуянлатни, хăйсен политикăллă пĕлĕвне çĕклени кирлĕ. Унсăрăн боецсене вăрçă техникине вĕрентес, çирĕп воспитани парас, хурçă пек дисциплинăна пăхăнма хăнăхтарас ĕçре ӳсĕмсем тума йывăр.

Всевобуч пункчĕсем Хĕрлĕ Çарăн пулас боецĕсене хатĕрлеççĕ. Вăрçă боецсемшĕн пысăк тĕрĕслӳ пулса тăрать. Боецăн çапăçу хирĕнче хăюллă та хастарлă пулмалла, кирек мĕнле условисенче те тăшмана çĕнтерме пĕлмелле. Çавăнпа та всевобуч работникĕсен боецсене вăрçă техникине кăна мар, тата тăшмана пĕтерсе тăкмалли мĕнпур майсене вĕрентмелле. Всевобуч пунк- [illegible]

[illegible]

Хĕрлĕ Çар валли—йышлă резерв хатĕрлер

[illegible]

Гварди капитанĕ ПОЛЯКОВ.

Финлянди правительствин делегаци председателĕ К. Энкель господин Мускава килни

[illegible]

Кашни колхозрах авăн çапакан тата государство валли тырă турттаракан бригадăсем пулмалла, вĕсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлемелле

Советски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри районĕсем тырă вырса пĕтерчĕç

Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне Советски район 16.405 гектар çинчи тырра вырса государство планне тултарнă, кĕлтесене 65,9 процент капана хывнă, 45 процент авăн çапнă. Сĕнтĕр районĕ 16.784 гектар çинчи тырра вырса плана тултарнă, кĕлтесене 54 процент капана хывнă, 43 процент авăн çапнă. Вăрмар районĕ 17.905 гектар çинчи тырра вырса, вăл ĕçе вĕçленĕ, кĕлтесене 61 процент капана хывнă, 42 процент авăн çапнă. Сĕнтĕрвăрри районĕ те 10.181 гектар çинчи тырра вырса, вăл ĕçе вĕçленĕ, кĕлтесене 72 процент капана хывнă, 48,5 процент авăн çапнă.

Республикăри колхозсем сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕлте турттарса капана хывас ĕçе 65,2 процент тултарнă, 44 процент авăн çапнă.

Кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас тĕлĕшпе Чурачăк, Калинино тата Çĕрпӳ районĕсем малта пыраççĕ.

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхăн итогĕсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). «Унгастрой» колхозăн пĕтĕмпе 285 гектар çинчи тырпула капана хывмалла пулнă пулсан, фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра 231 гектар çинчи тырпула капана хывнă, 123 гектар çинчи тырра çапса пуçтарнă. Кĕлте кӳрес тĕлĕшпе куллен 11 лашапа 6 вăкăр ĕçлеççĕ. Лашасемпе кунне пĕрер гектар çинчи кĕлтесене кӳреççĕ пулсан, И. Ильинапа И. Кураксин юлташсем вăкăрсемпе 1,2 гектар çинчи кĕлтесене кӳреççĕ. Ильина колхозница, кĕлте кӳнисĕр пуçне, капан тунă çĕрте те ĕçлет. Вăкăрсемпе кӳрекенсем кунне 4-шар ĕçкунĕ ĕçлесе илеççĕ. Иртнĕ вунăкунлăхра вĕсем 40-шер ĕçкунĕ тунă. Кĕлтесене капана хăвăртрах тата тĕплĕн хывса пĕтерес тесе, эпир ватă çынсене капан тунă çĕре явăçтартăмăр. И. Гаврилов, Ф. Поликарпов, И. Петров тата ыттисем кунне 60—70 лав кĕлте капана хываççĕ.

Кĕлте турттарса капана хывнипе пĕрлех, колхозра авăн çапас ĕç те ăнăçлăн пырать. Колхозниксем кăнтăрла та, çĕрле те авăн çапаççĕ. Ирхине 8 сехетре ĕçе тухаççĕ те каçхине 11 сехетчен ĕçлеççĕ. Унтан пĕр сехет çурă каннă хыççăн, уйăх хăпарса çитсен, каллех итем çине тухаççĕ. Вара ирхине 8 сехетчен çапаççĕ. Çапла ĕçлесе, эпир сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерме, сентябрĕн 25—28-мĕшĕсем тĕлне государствăна тырă парса татма шутлатпăр.

К. УДАЛОВА,
Ревизи комисси председателĕ.

Колхозри çитĕнӳсем ертсе пыракан çынсенчен килеççĕ

Йĕпреç районĕнчи «Чувашия» колхоз кая юлса пынă. Паллах, унăн сăлтавĕ колхозниксем начар ĕçлeнинче пулман; çакă вăл колхоз руководителĕсем колхоза кирлĕ пек ертсе пыма пĕлменнинчен килнĕ.

Кайран колхоз председателĕ пулма Я. Осипов коммуниста суйланă. Вăл чăн малтанах ĕç дисциплинине çирĕплетмелли майсем çине çавăрăнса пăхнă. Колхозри ĕçе уйрăм сдельщина меслечĕпе организациленĕ. Кашни бригадăрах звеносем тунă. Çав звеносене ертсе пыма хастарлă, ĕçлеме ӳркенмен çынсене уйăрнă. Тырпулсене пухса кĕртмелли ĕç планне тунă чухне пĕтĕмпех çак майсене шута илнĕ. Çапла ĕçленине кура, ĕç тухăçлăхĕ нумай ӳснĕ, стахановецсен йышĕ те куллен хутшăнса пынă. Халиччен нормăсене аран тултарма пултарнă Е. Исаева, У. Алексеева, К. Спиридонова, Ф. Миронова юлташсем тырă вырнă чухне çав нормăсенех 200-шер процент тултарма пуçланă. Тырă акакан П. Осипов юлташ ĕç нормине 300 процент таран, сӳрелекен А. Федоров 175 процент таран тултарса пынă.

Çапла колхоз председателĕ ĕçе тĕрĕс ертсе пынине пула, колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçленине пула, «Чувашия» колхоз малти рете тухрĕ.

И. КУРАКОВ.

Вунă кĕсререн—вунă тиха

Степан Григорьевич Коровин 14-мĕш çул ĕнтĕ пĕр улшăнмасăр «Спартак» колхозăн (Куславкка районĕ) аслă конюхĕ пулса ĕçлет. Çак 14 çул хушшинче вăл 147 тиха пăхса ӳстернĕ. Унăн хăйĕн кĕнеке пур, вăл кĕнекене 14 çул хушши çырса пынă, унта кĕсресем хăçан чупнине, хăçан хăмламаллине, хăçан кӳлме пăрахмаллине йăлтах çырса хунă. Степан Григорьевич халĕ 63 çулта, вăл ялхуçалăх выставкин участникĕ те пулнă. Вăл кĕсресене чуптарать те кĕнеке çине паллă тăвать, хăмлама вăхăт çитес чухне никама та кӳлтермест, пăхасса та уйрăм пăхать.

Кăçал Степан Григорьевич 10 кĕсререн 10 тиха илнĕ. Вуннăшĕ те лайăх çитĕнеççĕ.

Л. РОДИОНОВ.

Ĕçсыннин депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн та лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Çĕрпӳ районĕ тăрăх

5. «Ĕмĕт» колхоз (председателĕ Скворцов юлташ). 315 гектар çинчи тырпула сентябрĕн 4-мĕшĕнче выrса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене ретĕн-ретĕн тата агротехника енчен чи лайăх вăхăтра акса пĕтернĕ. Сентябрĕн 4-мĕшĕнче государствăна тырă парса татнă.

6. Уйкас ялсоветĕнчи «Дружба» колхоз (председателĕ Тимофеев юлташ). Тырăсене сентябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне выrса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене машинăсемпе тата кĕске срокра акса пĕтернĕ. Вăрлăхлăх курăксене вăхăтра пухса кĕртнĕ. Государствăна тырă сентябрĕн 3-мĕшĕнче парса татнă.

7. «Новая жизнь» колхоз (председателĕ Романов юлташ). 520 гектар çинчи тырра сентябрĕн 7-мĕшĕнче выrса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене 216 гектар çине агротехника правилисене лайăх пурнăçласа августăн 25-мĕшĕнче акса пĕтернĕ. Государствăна тырă сентябрĕн 7-мĕшĕнче парса татнă.

8. «КИМ» колхоз (председателĕ Плотников юлташ). 154 гектар çинчи тырра сентябрĕн 4-мĕшĕнче выrса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене агротехника енчен чи лайăх вăхăтра, августăн 24-мĕшĕнче акса пĕтернĕ. Государствăна тырă сентябрĕн 5-мĕшĕнче парса татнă.

9. «Красная Армия» колхоз (председателĕ Семенов юлташ). Тырпула сентябрĕн 2-мĕшĕнче выrса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене августăн 23-мĕшĕнче пысăк пахалăхпа акса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

10. «Коснария» колхоз (председателĕ Смирнов юлташ). Тырпула питĕ лайăх пухса кĕртнĕ. Кĕрхи тырăсене агротехника енчен питĕ лайăх вăхăтра акса пĕтернĕ. Государствăна тырă сентябрĕн 7-мĕшĕнче парса татнă.

11. «Новая сила» колхоз (председателĕ Скворцов юлташ). Тырăсене сентябрĕн 4-мĕшĕнче выrса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене питĕ лайăх акса хăварнă, вĕсене августăн 23-мĕшĕнче акса пĕтернĕ. Государствăна тырă сентябрĕн 6-мĕшĕнче парса татнă.

Елчĕк районĕ тăрăх

12. «Красный восток» колхоз (председателĕ Краснов юлташ). Тырăсене августăн 25-мĕшĕ тĕлне выrса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене агротехника енчен чи лайăх вăхăтра акса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

13. Сталин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Айдаров юлташ). Вăл тырăсене августăн 26-мĕшĕ тĕлне выrса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене агротехника енчен чи лайăх вăхăтра акса пĕтернĕ. Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

Вăкăрсемпе хатĕрлев пунктне тырă леçеççĕ

ШАХАСАН. Партипе правительство «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире колхоз правленисене ĕçре вăкăрсемпе тата сĕт сахал паракан ĕнесемпе усă курма хушнă.

Çак постановление пурнăçа кĕртсе, районри «Победа» колхозра (колхоз председателĕ Захаров юлташ) 22 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Вĕсене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетнĕ. Çав вăкăрсемпе кашни кунах Канашри хатĕрлев пунктне тырă леçсе параççĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăкăрсемпе кăна 600 центнер тырă леçнĕ. Уйрăм колхозниксем пĕр кунтах икшер хутлаççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхозри колхозница Кашина юлташ, 5 кун хушшинче 19 центнер тырă леçсе, 23 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илнĕ. Доронин ячĕпе тăракан колхозра М. Лаврентьева колхозница кашни кунах вăкăрпа 16 лав кĕлте кӳрсе 6 кун хушшинче 47 ĕçкунĕ тунă.

Районĕпе илсен, 23 колхозра 144 вăкăрпа ĕçлеççĕ. Вĕсемпе кĕлте кӳреççĕ, тырă тата тислĕк турттараççĕ, фермăри сĕте хатĕрлев пунктне леçеççĕ. Анчах та хăшпĕр колхозсен председателĕсем çак ĕçĕн уссине халĕ те ăнланса илмен. «Ударник» колхозра (колхоз председателĕ Филиппов юлташ) ĕçе юрăхлă 7 вăкăртан пĕринпе те усă курмаççĕ.

Çавăн пекех «Заря», «Комсомол», «Трактор» тата ытти колхозсенче те вăкăрсемпе усă курмаççĕ. «Совет» колхозăн председателĕ Степанов, «Пинер» колхозăн председателĕ Викторов, «Парижская коммуна» колхозăн счетовочĕ Андреев вăкăрсемпе ĕçленĕшĕн мĕнле йĕркепе ĕçкунĕ парассине те пĕлмеççĕ.

А. АНТОНОВ.

Агитаторсем колхоз ĕçĕнче пример кăтартаççĕ

Колхозниксем кăнтăрлахи апата ларнă тĕле вĕсем патне агитаторсем пыраççĕ. Ку вăл «IX съезд ВЛКСМ» колхозра тырă вырма пуçланăранпах çапла пулса пырать. Агитаторсен аллинче паян ир çеç илнĕ хаçатсем.

Агитатор пырсанах колхозниксем калаçма чарăнаççĕ, пурте пĕр çĕре пуçтарăнса лараççĕ.

— Шăпланăр-ха, Ольга Макарова килчĕ, —теççĕ вара ватă колхозницăсем, апат çиме чарăнсах.

Учительница Макарова юлташ 1-мĕш бригадăри колхозниксем хушшинче калаçу пуçлать. Вăл тĕнчери лару-тăру çинчен, совет çарĕсем хăвăрт малалла кайни çинчен каласа парать. Колхозницăсем татах мĕн те пулсан каласа пама ыйтсан, вăл вĕсене хаçатсем çинчи статьясене вуласа парать.

Анчах агитатор хăйĕн ĕçне кунпа пĕтермест-ха. Вăл колхозри ĕçсем çине куçать. Колхоз тырпула мĕнле пуçтарса кĕртет, унăн умĕнче мĕнле задачăсем тăраççĕ, паян-ĕнер уйрăм колхозницăсем ĕçе мĕнле тухрĕç, мĕнле ĕçлерĕç, — çаксем çинчен кĕскен те ăнланмалла калать вăл.

Çакăн пек ĕçлеççĕ агитаторсем ытти бригадăри колхозниксем хушшинче те. Вĕсем ытла нумайăн та мар: вулав çурчĕн заведующийĕ Кириллова, ялсовет председателĕ Трофимова, ялсовет секретарĕ Иванова, колхоз председателĕ Петров, — çаксем туса пыраççĕ колхозра агитаци ĕçне. Вĕсем — куллен колхозниксем хушшинче, колхозниксене татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Агитаторсем калаçусем ирттернипе пĕрлех, хăйсем колхозниксемпе юнашар тăрса ĕçлесе, лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кирилловăпа Макарова юлташсем уборка пуçланнăранпах тырă вырчĕç, куллен нормăна 120—160 процент тултарса пычĕç.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркеллĕн туса пыни кăçал колхоза районра малта пыракансен ретне тăма пулăшрĕ. Колхоз уйри мĕнпур тырпула сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне выrса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли обязательствăна тултарнă, çитес кунсенчех авăн çапса пĕтерет. Колхозниксем пур ĕçе те кал-каллăн туса пыраççĕ, вĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлнă. Çуртырри çулнă çĕрте А. Иванов кĕреплеллĕ çавапа куллен 0,70—0,75 гектар çулса пычĕ, А. Семенова, Е. Степанова тата ытти колхозницăсем нормăна 150 процентран кая мар тултарса пычĕç.

Халĕ колхозниксем авăн çапаççĕ, çĕрулми кăлараççĕ, кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Вĕсемпе пĕрле агитаторсем те ĕçлеççĕ. Вĕсен тĕрĕс те витĕмлĕ сăмахĕ мĕнпур колхозниксене татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнет, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Х. ЛИСИН.
ЭЛĔК. (Хамăр корр.).

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Куславкка комбиначĕн коллективĕ Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕпе ăмăртăва тухать

КУСЛАВККА, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатри рабочисемпе инженерла-техникăла работниксем тата служащисем Мускаври Сталин ячĕпе тăракан завод коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва организацилеме чĕннине ырлаççĕ. Комбинат коллективĕ вунă уйăхри плана срокчен тултарса, планран ирттерсе 2 миллион та 143 пин тенкĕлĕх продукци кăларма, Броцкий, Ольша, Крючков юлташсем начальник пулса ĕçлекен цехсенчи агрегатсене поточнăй методпа ĕçлесси çине куçарма, подсобнăй хуçалăхри пахча-çимĕçсене тăкаксăр пухса кĕртме, хĕле тĕплĕн хатĕрленме сăмах пачĕ. Кусемсĕр пуçне, рабочисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас, культурăллă-массăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе чылай мероприятисем пурнăçа кĕртме палăртнă.

Çак обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес енĕпе комбинат коллективĕ Çĕмĕрлери комбинат коллективĕпе социализмлă ăмăртăва тухма йышăнчĕ.

Н. ПЕТРУЧЕНКО.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕн сăмахĕ

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри пур цехсенче те Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-явнă. Завод коллективĕ, ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ обязательствăсем илнĕ.

Нумай пысăк ĕçсене пурнăçа кĕртме палăртнă вăл. Продукци туса кăларассине, кăçалхи январь уйăхĕнчи виçепе танлаштарсан, сентябрьте 22 процент, октябрьте 24 процент ӳстермелле, ĕç тухăçлăхне 3-мĕш кварталта малтанхи çурçулхинчен 10 процент ытларах ӳстермелле, продукцин хăйне ларакан хакне 10 процент йӳнетмелле. Çамрăк рабочисене производствăпа техника тĕлĕшĕнчен вĕрентмелли çулталăкри плана срокчен тултармалла: пурĕ стахановла шкулсем урлă тата ытти йĕркепе 800 çынна вĕрентсе хатĕрлемелле. Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене 100 çити ӳстермелле, нормăна тултарман рабочисен хисепне, августрипе танлаштарсан, 30 процент чакармалла. Завода хĕле тĕплĕн хатĕрлемелле, подсобнăй хуçалăхри тата уйрăм пахчасенчи çимĕçсене ăнăçлăн пуçтарса кĕртмелле.

Завод коллективĕ çав ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртессине çирĕппĕн шанса тăрать. «Эпир хамăрăн тăван çĕршыв умĕнчи хисеплĕ тивĕçе яланах асра тытатпăр,— тесе çырнă уяв умĕнхи ăмăрту договорĕнче. — Фронта ытларах пулăшассишĕн, çĕнтерӳ сехетне çывхартассишĕн социализмлă ăмăртăва татах та анлăн сарса пырăпăр. Заводăн производствăри майĕсемпе туллин усă курса, производствăна организацилес ĕçе лайăхлатса пырса, эпир хамăр илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçа кĕртетпĕр».

Ĕç тухăçлăхне 10 процент ӳстерме пулаççĕ

Шупашкарти механизациленĕ вăрман пунктĕнчи рабочисем пурте нормăна ирттерсе тултараççĕ. Пихтулинăри тата Лебединăри участоксем стахановла участоксен ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Пихтулинăри участокра нормăна 150 процентран кая тултаракансем пачах çук.

Вăрман пункчĕн коллективĕ, Сталин ячĕпе тăракан завод коллективĕн чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн, аслă уява çитĕнӳсемпе кĕтсе илме сăмах пачĕ. Вăл ĕç тухăçлăхне 10 процентран кая мар ӳстерме пулчĕ. Кунсăр пуçне, коллектив сортлă йывăçсем хатĕрлессине хăвăртлатас тĕлĕшпе чылай мероприятисем пурнăçа кĕртме палăртнă.

ПРОМЫШЛЕННОСРА ТОПЛИВĂНА ВИÇЕЛЛĔ ÇУНТАРМАЛЛА ТĂВАССИ

Инженерсемпе техниксен наукăллă обществисен Пĕтĕм Союзри Совечĕ, СССР Госпланĕ хушнă тăрăх, промышленность предприятийĕсенче, транспортра тата коммунальнăй хуçалăхра топливăна мĕн чухлĕ çунтармаллине шутламаллин методикине çырса хатĕрлет.

Электростанцисенче, паровозсенче, хуранлă установкăсенче, селикатпа цемент промышленноçĕн предприятийĕсенче, металл шăратакан предприятисенче топливо мĕн чухлĕ çунтармаллине шутласа хунă ĕнтĕ. Кашни предприяти валли пĕтĕм вăйпа ĕçленĕ чухне продукцин кашни единици пуçне мĕн чухлĕ топливо çунтармаллине кăтартса панă. Çавăн пек нормăсене хура металлургипе тĕслĕ металлурги валли, юханшывсем çинчи тата тинĕсри флот валли, çавăн пекех тата халăх хуçалăхĕн ытти отраçлĕсем валли те çырса хатĕрлеççĕ.

Çав нормăсене мĕнле майпа шутласа хумаллине пĕлни—планлакан организацисемшĕн тата çĕркăмрăкĕ, торф, нефть çунтаракан предприятисемшĕн питĕ паха пулса тăрать, вăл топливăна перекетлес ĕçре чылай пысăк пулăшу памалла. (ТАСС).

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне район аллинче илнипе хавасланса, Вăрнар районĕнчи колхозсем государствăна тырă пама массăллă хĕрлĕ обозсем организациленĕ. Ӳкерчĕк çинче: Хатĕрлев пунктне кайма тухнă хĕрлĕ обозсем.

С. ФРИД фотоӳкерчĕкĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПРАГĂРАН çурçĕртерехре, поляксен 1-мĕш армийĕн чаçĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç хытă çапăçса, малалла куçса пынă. РЫНЯ, БЯЛОБЖЕГИ, АЛЕКСАНДРУВ, ИЗАБЕЛИН, СТАНИСЛАВУВ, ЧАРНА СТРУГА, МАРКИ, ГРОДЗИСК, БЯЛОЛЕНКА, АННОПОЛЬ, ТАРГУВЕК ятлă ялсене туртса илнĕ.

САНОК хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем ЛИСКО хулине, ПЛОННА, БЖОЗОВЕЦ, ЛУКОВЕ, ДЖЮДЖЮВ, ГОЧЕВ, УГЕРЦЕ, РУДЕНКА, БЕЗМИХОВА ятлă ялсене тата УГЕРЦЕ ятлă чугун çул станцине туртса илнĕ.

Çурçĕрти Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, ТОПЛИЦА хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — СОВАТА, ШИКЛОД, КИБЕД, МАДЬЯРОШ, МАКФАЛВА, ВАДАШ, ХАВАДТЭ, БОРДОШЬЮ ятлă пысăк ялсем тата СОВАТА, КИБЕД, ЧОК, ЭРДЭ-СЕНТ-ДЬЭРДЬ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 110 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 72 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БУДАПЕШТ ХУЛИНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Сентябрĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци каллех Венгри столицине—Будапешт хулине йышлăн вĕçсе кайса тапаннă. Будапештри çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнине пула, 35 тĕлте ытла пушар тухнă, вĕсенчен 20-ĕшĕ питĕ вăйлă пушарсем пулнă. Бомбăсем Дунай шывĕ урлă хывнă кĕпер çине ÿкни палăрнă. Хĕвеланăç вокзалта, чугун çулсен тĕп мастерскойĕн, машинăсем тăвакан заводăн территорийĕнче тата хулари ытти предприятисенче те пушар вăхăтĕнче вăйлă взрывсем пулнă. Пушар çулăмне пирĕн летчиксем Будапештран 250 километр каялла вĕçсе кайсан та курнă.

☆ ☆ ☆

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ПРАГА ХАЛĂХĔ ХĔРЛĔ ÇАРА ХАВАСЛАНСА КĔТСЕ ИЛНĔ

Варшава çумĕнчи Прага халăхĕ Прагăна нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă совет çарĕсене питĕ хавасланса йышăннă. Прагăра урамсенче çапăçнă вăхăтра вырăнти халăх, хăйне хăй хĕрхенмесĕр, пирĕн боецсене пулăшнă. Поляк хĕрĕсемпе хĕрарăмĕсем, артиллери вут-çулăмĕнчен хăрамасăр, хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр, çапăçу хирĕнчен аманнă совет воинĕсене йăта-йăта тухнă, вĕсене пулăшу панă. Прагăна нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн Прага çыннисем совет боецĕсемпе командирĕсене хăйсем патне хăнана чĕнеççĕ. Вырăнти халăх сăмахпа та, ĕçпе те Хĕрлĕ Çара юратнине, ăна тав тунине палăртма тăрăшать. Прага çыннисем хăйсене нимĕç ирсĕрĕсем епле мăшкăлласа асаплантарни çинчен, епле тискер ĕçсем туни çинчен каласа кăтартма тăрăшаççĕ. Персе пăрахассипе хăратса, гитлеровецсем Прага халăхне каторгăна хăвала-хăвала кайнă. Çапах та поляксем нумайĕшĕ хăйсен тăшманĕсенчен пытанса юлма мел тупнă. Вĕсем Хĕрлĕ Çар килессе кĕтсе илнĕ. Паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ боецсене унта чаплă пытарнă. Пытарма вырăнти халăх темиçе пин çын пухăннă. Прагăна ирĕке кăларассишĕн çапăçса вилнĕ геройсен вилĕ тăприсене поляксем чечексемпе илемлетнĕ. Хĕрлĕ Çар Командованийĕ вырăнти халăха апат-çимĕç парса пулăшать, мĕншĕн тесен нимĕçсем хуçаланнă вăхăтра Прагăри халăх нумай уйăхсем хушши выçă пурăннă.

Çакна паллă туса хăвармалла: Бур генерал хăйĕн Прага районĕнчи «вăрттăн ĕçлекен» çарĕ çинчен питĕ хытă шавланăччĕ, анчах та Прагăра çав «вăрттăн ĕçлекен» армин пĕр салтакне те курма пулман.

☆ ☆ ☆

Прагăран çурçĕртерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Çÿллĕ вырăнсенче, поселоксенче тата чугун çул линийĕ хыçĕнче çирĕпленсе ларнă нимĕçсем хытă хирĕç тăнă. Пирĕн çарсем поляксен пĕрремĕш армин чаçĕсемпе пĕрле гитлеровецсене укрепленисемпе хÿтлĕхсенчен хĕсе-хĕсе кăлараççĕ. Хаяр çапăçу хыççăн тăшмана унăн оборонин Аннополь ятлă хăватлă узелĕнчен хăваласа кăларнă. Çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти чылай пунктсене те туртса илнĕ.

Пирĕн летчиксем тăшманăн персе тăракан вырăнĕсене тата пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене пыра-пыра çапнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 13 самолетне персе ÿкернĕ.

Прагăшăн тăватă кун хушши çапăçса, совет çарĕсем тата поляксен 1-мĕш армийĕн чаçĕсем 8.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 70 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă, 54 хир туппи тата 380 пулемет пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ, вăл шутра—8 юсавлă танк, 14 бронетранспортер тата 52 тупă. 400 нимĕç салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ.

* * *

Санок хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Луково ялĕ районĕнче нимĕçсем ултă хутчен контратака тунă. Тăшмана халтан янă хыççăн совет боецĕсем нимĕçсене хăйсене [illegible]

пырса çапнă та каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла выртса юлнă. Пĕр соединени чаçĕсем хаяр çапăçусем хыççăн Сан шывĕ урлă каçнă та Лиско хулине туртса илнĕ. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тÿстернĕ.

Пирĕн гварди лейтенанчĕ Андриянов командир пулса ертсе пыракан 6 самолет-штурмовик, икĕ истребитель хÿтĕлесе пынипе, нимĕçсен пĕр çĕре пухăнса тăнă танкĕсене тата артиллери позицийĕсене штурмланă. Çав вăхăтра тăшманăн 8 истребителĕ вĕçсе тухнă. Сывлăшра хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Совет летчикĕсем нимĕçсен 5 самолетне персе ÿкернĕ, пирĕн пĕр самолет та пĕтмен.

* * *

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле çапăçса, халăх пурăнакан чылай пункта тăшмантан тасатнă. Нимĕçсемпе венгерсене шоссе çулĕсен паха [illegible] маневр туса, гитлеровецсене йывăр çухату тÿстернĕ. Нимĕçсемпе венгерсен 1.200 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Пыл хурчĕсене хĕл каçарма хатĕрленесси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри колхозсене [illegible] пыл хурчĕсене хĕл каçарма хатĕрленесси [illegible] палăртнă. [illegible]

Кăçал çанталăк начар тăнă пирки [illegible] Чăваш АССР Совнаркомĕ [illegible]

[illegible] асăрхаттарма хушнă. Мĕншĕн тесен çуяçă çинчи пыл хурт-хăмине вĕлерме пултарать. [illegible] Чăваш АССР Совнаркомĕ [illegible] пыл пуçне пĕр килограмм сахăр пама ирĕк панă.

Чăваш АССР суту-илÿ Наркомачĕ, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн заявки тăрăх, [illegible] сахăр пама [illegible]

ВЛКСМ Обкомĕпе промысла кооперации Управленийĕн уполномоченнăйĕ патĕнче

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕпе РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи промысла кооперации Управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ, промысла кооперацин артелĕсенче çамрăксен бригадисен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи августри итогĕсене пăхса тухса, çак бригадăсем мала тухнине палăртнă:

Чăвашшвейпромсоюз системин Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан артельри комсомолецсемпе çамрăксен бригади (бригадирĕ Туюкова) август уйăхĕнчи производство планне 172 процент тултарнă. ВЛКСМ Обкомĕпе промысла кооперации Управленийĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне çак бригадăрах хăвармалла тунă. Çакăнпа пĕрлех бригадăна 1-мĕш премии: бригадирне 300 тенкĕ, бригада членĕсене 150-шар тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Иккĕмĕш премие Шупашкарти «Кожупряжь» артелĕн [illegible] бригадине (бригадирĕ Железова) [illegible] премиленĕ. Бригада уйăхри производство планне 175 процент тултарнă.

Çавăн пекех Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Портной» артельти çамрăксен бригади (бригадирĕ Степанова) производство планне 170 процент, Шупашкарти «Кожупряжь» артельти çамрăксен бригади (бригадирĕ Семенова) уйăхри производство планне 138 процент, Канашри «Майăн 1-мĕшĕ» артельти çамрăксен бригади (бригадирĕ Федотова) производство планне 125 процент тултарнă.

Кашкăрсем тытнăшăн премисем парасси çинчен

Чылай çĕрте кашкăрсем выльăхсене ватса колхозсемпе колхозниксен хуçалăхĕсене сиен кÿреççĕ. Çавна шута илсе, кашкăрсем тытас тĕлĕшпе сунарçăсен республикăри висĕ бригадине (бригадăра 6-шар çын) тунă. Кунсăр пуçне райсовет исполкомĕсем хăйсен районĕсенче те сунарçăсен бригадисене тăваççĕ. Колхоз председателĕсем çав бригадăсене транспорт тата ытти енĕпе те пулăшса тăма тивĕçлĕ. Суту-илÿ организацийĕсен кашкăр тирĕсене паракансем валли вырăнти фондран çимĕçсемпе промышленность таварĕсем уйăрса памалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çак çулхи августăн 25-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, колхозсене хăйсен сывăхĕнче тытнă кашкăрсемпе вĕсен йăвисене тупакан сунарçăсене çакăн пек выльăхсем парса премилеме сĕннĕ: çитĕнсе çитнĕ пĕр кашкăр тирĕшĕн — 10 килограмм туртакан пĕр путек, 2 кашкăр тирĕшĕн — çитĕнсе çитнĕ пĕр сурăх, кашкăр йăвинчи пĕр кашкăр çурине тата ама кашкăра вĕлернĕшĕн — пĕр çула çитнĕ пăру, висĕ кашкăр çурине тытсан — кашнишĕнех 10 килограмм туртакан путек тата укçа параççĕ.

С. НИПАДИСТОВ,
«Заготживсырье» конторин управляющийĕ.

Академи театрĕн филиалĕнче

Чăвашсен государство академи театрĕн Калининăри филиалĕ ĕçлеме пуçларĕ. Çĕнĕ театр коллективĕ кĕске вăхăтрах колхозниксене кăтартма лайăх постановкăсем хатĕрлерĕ.

Унăн репертуарĕнче Мариенгофăн «Пирĕн хĕр», Чеховăн «Упа» ятлă пьесисем тата ытти произведенисем те пур.

Театр коллективĕ хăй ĕçлеме тытăннăранпа районри 20 колхозра ытла пулчĕ. Театра пурĕ 15.000 çын пырса курчĕ.

В. ЗАЙЦЕВ.

СПОРТ

Шкул ачисен ăмăртăвĕ

Сентябрĕн 10—11-мĕшĕсенче Шупашкарта çăмăл атлетикăпа шкул ачисен республикăри ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăртăвăн программинче: 100, 500, 1000 метра чупса тухасси, чупса пырса инçене тата çÿлелле сикесси, граната ывăтасси, чăрмавсем урлă каçма вĕренесси пулчĕ.

Икĕ кун хушши пынă ăмăртура Улатăр хулинчи шкул ачисен команди мала тухрĕ. Иккĕмĕш вырăна — Сĕнтĕр, виççĕмĕш вырăна — Улатăр районĕсенчи командăсем йышăнчĕç.

Ăмăртура уйрăмăнах çак юлташсем лайăх результатсем кăтартрĕç: Улатăр хулинчен килнĕ Л. Патюков 1000 метра 3 минута та 15 секундăра, Л. Аникина 500 метра пĕр минута та 42 секундăра, З. Макаров 100 метра 13,2 секундăра чупса тухрĕç. Çавăн пекех вĕсем граната ывăтассипе, чупса пырса инçене тата çÿлелле сикессипе те хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕç. Чăрмавсем урлă Элле (Улатăр районĕ) 45 секундăра каçса тухрĕ.

Ăмăрту пĕтнĕ хыççăн 1—2-мĕш вырăнсене йышăннă Улатăр хулипе Сĕнтĕр районĕнчи командăсене тата мала тухнă уйрăм шкул ачисене республикăри физкультурăпа спорт комитечĕн хисеплĕ грамотипе наградăланă.

А. ВАСИЛЬЕВ.

И. А. КРЫЛОВĂН ЮБИЛЕЙНЕ ИРТТЕРМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

СССР Наукăсен академийĕнче, Наркомпросра, музейсенче, библиотекăсенче, культура çурчĕсенче И. А. Крылов вилни 100 çул тултарнине иртерме хатĕрленеççĕ.

Наукăсен академийĕн пĕтĕм тĕнчери литература институчĕ вырăссен басньăсем çырнă аслă писателĕн пултарулăхне кăтартса паракан статьясен сборникне пичетлеме хатĕрлесе хунă. Çав статьясенче Крылов литературăн тĕрлĕ пайĕсем тĕлĕшпе ĕçленине—поэт, драматург, журналист пулса ĕçленине, вăл вырăс литературипе пĕтĕм тĕнчери литературăна малалла аталантарас ĕçре çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнине çутатса панă.

Пирĕн çĕршыври чи пысăк библиотекăсенче, халăха çутта кăларакан учрежденисенче тата шкулсенче юбилей кунĕ тĕлне кĕнеке выставкисем тăваççĕ тата литературăпа художество каçĕсем туса иртереççĕ. Ленинградри Салтыков-Щедрин ячĕпе тăракан библиотека пысăк выставка тума хатĕрленет, çав библиотекăра Крыловăн питĕ нумай произведенийĕсем пур тата унта çав произведенисене ют çĕршыв чĕлхисем çине куçарнисем пур. В. И. Ленин ячĕпе тăракан государство библиотекинче те кĕнекесемпе иллюстраци выставки усăлать. Кунсăр пуçне, унта çамрăксем валли хăйне уйрăм выставка тăваççĕ. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 15-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Çурçĕр-хĕвелтухăç Бельгире кĕрешекен союзниксен çарĕсем Мальдегем хулинчен çурçĕртерехре Леопольд каналĕ патне çитнĕ. Тăшмана тапăнма тунă укрепленирен кăнтăртарахра Эско каналĕн районĕнчи çĕршыва тăшмантан тасатаççĕ. Кунтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Германи çĕрĕнче нимĕçсен темиçе пысăках мар хулине туртса илнĕ. Малтанах хатĕрлесе хунă позицисем çинче тăшман вăйлăрах та вăйлăрах хирĕç тăма пуçларĕ.

Сен-Вит хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Зигфрид линийĕн оборона укрепленийĕсен тул енчи тăрăхне 6 миля сарлакĕш фронтра татнă. Ытти чаçсем малалла куçса пынă май чылай пысăк чăрмавсемех тĕл пулаççĕ. Тăшман çулсене йĕри-тавраx хупăрласа илет, пулемет йăвисем туса хурать. Анчах та союзниксен çарĕсем çав-çавах малалла куçса пыраççĕ.

Мозель шывĕ улăхĕнче тăшман союзниксен укрепленийĕсене хирĕç вăйлă контратакăсем пуçласа янă. Нанси хулинчен кăнтăртарахри районра союзниксен çарĕсем каллех малалла куçнă, кунта тăшман хытă хирĕç тăрса çапăçать.

Брест хулинчи нимĕç гарнизонĕ союзниксем парăнма хушнă сĕнĕве йышăнман. Унта çаплах вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Брест хулинче вăйлă взрывсем пулни илтĕнет.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер Брест хулине тата тăшманăн ытти объекчĕсене те нумай тĕлте питĕ хаярран тапăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 15-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Флоренци хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре «Гот линийĕн» укрепленийĕсенче тăракан тăшман 5-мĕш армири акăлчансемпе американецсен чаçĕсене хирĕç вăйлăрах çапăçма пуçланă. Фронтăн ытти участокĕсенче çаплах патрульсем хытă кĕрешеççĕ. Паллă улшăнусемех пулман.

Сентябрĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен çыран çумĕпе ишсе çÿрекен çăмăл карапĕсем Генуя заливĕнче тăшманăн висĕ суднине шыва путарнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çулĕсем çине тата нимĕçсен Афины хули районĕнчи аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Македонин пысăк пайне нимĕç оккупанчĕсенчен тасатнă. Югослави чаçĕсем Прилеп, Крушево, Кичево, Брон, Кратово, Градско, Ноготин тата Буяновац хулисене туртса илнĕ.

Югославин Сербире кĕрешекен чаçĕсем Крушевац хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та халĕ унта урамсенче çапăçаççĕ. Боснире Бугойно хулипе Тешань хулине ирĕке кăларнă.

НИМĔÇСЕМ ЭГЕЙ ТИНĔСĔНЧИ УТРАВСЕМ ÇИНЧЕН КУÇСА КАЯÇÇĔ

АНКАРА, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Измир хулинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, нимĕçсем Хиос утравĕ çинчен куçса кайнă. Куçса каяс умĕн вĕсем утрав çинчи пĕтĕм йывăр хĕçпăшала тата çар склачĕсене те пĕтерсе тăкнă.

Çавăн пекех нимĕçсем Лесбос тата Лемнос утравĕсем çинчен те кайма тытăннă. Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, çак утравсем çинчен куçакан нимĕçсем Салоникие каяççĕ.

НИМĔÇСЕМ СУУН-СААРИ УТРАВНЕ ТЫТСА ИЛМЕ ХАТЛАННИ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн, 15-мĕшĕ. (ТАСС). Хельсинкири радио çакăн пек официальнăй пĕлтерÿ панă: сентябрĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Суун-Саари утравĕ çинчи финсен командованийĕ патне нимĕç офицерĕ пынă та çав утрава Германи çарĕсен аллине пама хушнă. Финсен командованийĕ нимĕç офицерĕ ыйтнине йышăнман, вара нимĕç çарĕсем темиçе тĕлте çав утрав çине анма хăтланса пăхнă. Финсен çыранри тата суднăсем çинчи артиллерийĕ нимĕçсен çарĕсен атакисене сирсе янă. Пĕр позици районĕнче çĕç паян ирхине ирех çапăçусем пынă. Финсен артиллерийĕ нимĕçсен 9 суднине шыва путарнă е вут тивертсе янă.

Болгарири лару-тăру

СОФИЯ, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, Болгари влаçĕсем салатса янă фашистла организацисен пурлăхĕсене тытса илсе государство аллине пама хушнă.

Болгарин çар министрĕ Дамян Велчев генерал, шалти ĕçсен министрĕ Антон Югов тата партизансен тĕп штабĕн представителĕ Благой Иванов пĕрле çакăн пек приказ кăларнă:

«Болгарин фашистла пуçлăхĕсем Гитлер гестаповецĕсемпе пĕрле пирĕн çĕршывра темиçе çул хушши халăха хирĕç пыракан политикăна пурнăçласа пычĕç. Сентябрĕн 9-мĕшĕнче вĕсене влаçран пăрса янă. Çав кунтан вара Болгари халăхĕн пурнăçĕнче çĕнĕ самана пуçланса кайрĕ, анчах та хăрушлăх сирĕлсе пĕтмен-ха. Вырăнтан сирпĕтнĕ фашистсемпе Гитлер агенчĕсем çĕнĕ правительствăна хирĕç пур майсемпе те кĕрешме хăтланĕç. Çавăн пек лару-тăрура халăхпа çарăн пĕрлĕхлĕ пулмалла. Çавăнпа та эпир çапла тума хушатпăр: мĕнпур провокаторсене, влаçа хирĕç ĕçлекен çынсене пурне те тытмалла, вĕсене питĕ хытă айăпламалла; офицерсене тата унтер-офицерсене эпир хăйсенчен аслăрахисене пăхăнса тăма тата дисциплинăна çирĕп тытса пыма хушатпăр».

«ТИМПУЛ» ХАÇАТ РУМЫНИРЕ НАЦИЛЛĔ-ДЕМОКРАТИЛЛĔ БЛОК ТУНИ ТАТА ВĂЛ ĔÇЛЕНИ ÇИНЧЕН

БУХАРЕСТ, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Тимпул» хаçат Румынире нациллĕ-демократиллĕ блок туни çинчен çырнă статьяра çапла калать: Румынире Антонеску режимĕпе политикине хирĕç тăрасси Румыни 1941 çулта Совет Союзĕпе вăрçма тытăнсанах пуçланнă. Çав режимпа политика пирки тăрăхнине Сибиу хулинче интеллигентсен пĕр ушкăнне судпа айăпланă, профессорсен ушкăнне суд туни тата ыттисем те кăтартса параççĕ. Çак çулхи апрель уйăхĕнче, тесе çырать малалла хаçат, национал-царанистсен, национал-либералсен, коммунистсен тата социал-демократсен партийĕсем, нациллĕ-демократиллĕ блок туса, политикăра пĕрлĕх тăвасси çинчен калаçма пуçланă. Çав блокăн ĕçĕ августăн 23-мĕшĕнче пулнă историллĕ событисемпе вĕçленчĕ. Çапла вара, çав блокăн пĕтĕмĕшле ĕç программин пĕрремĕш пайне пурнăçланă: Румынире Антонеску режимне пĕтерсе лартнă, Румыние вăрçма пăрахтарнă, ăна союзниксем майлă çавăрса лартнă.

Нациллĕ-демократиллĕ блокăн, хаçат каланă тăрăх, тумалли ĕçсен анлă программи пур. Çав программа тăрăх çаксене тумалла: Хĕрлĕ Çар пулăшнипе Çурçĕр Трансильвание ирĕке кăлармалла, государство аппаратне фашистсенчен тата фашистсем майлă ĕçлекенсенчен тасатмалла, граждан ирĕклĕхĕсене пурне те сарса ямалла. Блокăн бюро пур, кăтартнă вăхăтсенче вăл ларусем туса иртерет, пăхмалли ыйтусене пăхса тухать, çав ыйтусене вара правительствăна тăратать, правительство вăл ыйтусем тăрăх кирлĕ решенисем йышăнать. Блок руководителĕсем правительствăн пĕтĕм ĕçне хутшăнаççĕ. Блокăн бюровне çаксем кĕреççĕ: национал-либералсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Константин Братиану, национал-царанистсен партийĕн секретарь заместителĕ Ион Людиц, рабочи юхăмĕн деятелĕ Константин Ажну, Румынире фашистсене хирĕç кĕрешес ĕçĕн руководителĕсенчен пĕри Петре Константинеску тата социал-демократсен партийĕнчен Стефан Войтек.

БЕЛЬГИ ПАРЛАМЕНТНЕ ПУХАÇÇĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 19-мĕшĕнче Бельги парламенчĕн икĕ палатин пĕрремĕш ларăвĕ пулать, ăна король çук вăхăтра ĕçлемешкĕн регент тупса лартма пухаççĕ. Парламент регент пулма королĕн шăллĕне Шарль принца лартĕ тесе шутлаççĕ. Регент тупса лартсанах, Пьерло правительстви вырăнтан тухать, вара çĕнĕ правительство туса хураççĕ.

Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхе ăшă çĕрте тата тутă хĕл каçарма хатĕрленер

Г. А. МАРТЫНОВ.
ВКП(б) Обком секретарĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ.

Пирĕн республикăри малта пыракан колхозсем, паттăр Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, çĕршывпа фронта ытларах аш-какай, сĕт-çу тата ытти апат-çимĕçсем туса пама тăрăшса, обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлăн ĕрчетсе пыраççĕ. Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем, государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултарса, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура укçан иккĕмĕш преми тата Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне район государствăна аш-какай памалли плана та тултарчĕ. Çавăн пекех государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне Шупашкар, Чурачăк тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсем те ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Пирĕн республикăри чылай колхозсем выльăхсене хĕлле тăрантарма нумай тĕрлĕ апат-çимĕç пухса хурас, выльăхсем валли типĕ те ăшă, сутă çуртйĕрсем юсаса тата çĕнĕрен туса хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Ĕмĕт» колхозра фермăри работниксемпе ытти колхозниксенчен выльăх витисем юсакан бригада организациленĕ. Çав бригада вара мĕнпур выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене августăн 1-мĕшĕ тĕлнех хĕле хатĕрлесе çитернĕ. Кунта пăрусем тата ытти тĕрлĕ çамрăк выльăхсем хупса усрамалли витесене хатĕрлес ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Çав районри «Чуваш. ЦИК» колхоз кăçалхи çул пăрусем валли стандартлă çĕнĕ вите туса лартнă, çав витерех ĕнесене пăрулаттармалли пÿлĕм те тунă. Вăрнар районĕнчи Вăрманкас колхозĕ 200 пуç вырнаçмалăх çĕнĕ сысна вити тунă. Вăрмар районĕнчи «Большевик», Шупашкар районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан тата «1-ое мая» колхозсенче лаша витисемпе ĕне витисене, сурăх витисемпе сысна витисене тата кайăк-кĕшĕк хупмалли çуртсене пĕтĕмĕшпех юсанă, витесенчи тислĕке тасатнă, шалта дезинфекци тунă, витесен стенисене шуратнă.

Анчах пирĕн республикăри нумай колхозсенче выльăх витисене юсама халиччен те тытăнман-ха. Чылай çĕрте çурт çийĕсене витмен, витесен маччисем çук, вите урайĕсене юсаса сарман, шăтăк-çурăксене питĕрмен тата ытти çавăн пек питех те кирлĕ ĕçсене туман.

Выльăх-чĕрлĕх йышне, уйрăмах çамрăк выльăхсен йышне, сыхласа хăварас, выльăх-чĕрлĕх тухăçне ÿстерес ĕçре выльăх витисене лайăх юсаса хатĕрлени тата выльăхсем валли тĕрлĕ апат-çимĕç кирлĕ таранах пухса хуни пысăк вырăн йышăнать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçармашкăн апат тата çуртйĕр хатĕрлесе хурасси çинчен» йышăннă постановленире колхозсемпе çĕрĕç органĕсен тата партипе совет организацийĕсен руководителĕсене пĕлтĕрхи йăнăшсене тăвассинчен сыхланма кирли пирки хыттăн асăрхаттарса хăварчĕç. Иртнĕ çул чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ таран апат-çимĕç, çуртйĕрсем хатĕрлесе хуман, çавна пула вара хĕллехи вăхăтра чылай выльăхсем, уйрăмах çамрăк выльăхсем, чирлесе вилнисем пулчĕç.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райисполкомсемпе парти райкомĕсене выльăх витисене хĕле мĕнле хатĕрлесе çитернине тĕрĕслесе тухас тĕлĕшпе государство комиссийĕсем тума, мĕнпур колхозсенче выльăхсем хупса усрамалли çуртйĕрсене юсас тĕлĕшпе ĕçлеме ремонт бригадисем уйăрма хушса хăварчĕç. Хăшпĕр районсенче çакă питех те паха постановление çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çавна пула лайăх вăхăта ахалех ирттерсе ярас хăрушлăх пур. Кайран вара, кĕркунехи йĕпе-сапаллă, сивĕ кунсем çитсен, выльăх витисене хатĕрлес ĕçе васкавлăн та çиелтен туса хăвараççĕ.

Ĕç çавăн пек ан пултăр тесен, çĕрĕç органĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен, парти райкомĕсемпе райисполкомсен ку ĕçе çирĕп алла илсе ертсе пымалла, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх витисене хĕле хатĕрлес ĕçе тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсемпе пĕрлех туса пымалла.

Ку тĕлĕшпе колхозсене комсомол организацийĕсем нумай пулăшма пултараççĕ. Вĕсен ку ĕçе хăйсен аллине илмелле. Строительствăпа ремонт бригадисем халиччен туман çĕрте çав бригадăсене халех организацилес пулать, саланса кайнă бригадăсене çĕнĕрен пухмалла, бригада членĕсене колхозăн ытти ĕçĕсенчен выльăх витисем юсанă çĕре куçармалла.

Выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçре, çапла ĕнтĕ, колхозсен тĕп задачи — выльăхсене хĕл вăхăтĕнче усрама ăшă та типĕ, таса та çутă витесем хатĕрлесе парасси пулать. Выльăх-чĕрлĕхе сивĕ витере усранă чухне выльăх апачĕ ытлашши расходланса пĕтет, хĕллехи вăхăтра выльăхсене пăтратса пама, сĕткенлĕ апатсем пама май пулмасть. Маччасемпе стенасем сивĕ пулнипе витесем нÿрелсе каяççĕ, çавна пула вара выльăх-чĕрлĕх чирлесе пăсăлать.

Чăн малтанах, вите стенисене лайăх мăкласа питĕрмелле, çĕрнĕ пĕренесене улăштармалла, стенасене икĕ енчен те тăм сĕрмелле. Выльăх витисене тăмпа штукатурка тума кашни колхозах пултарать. Комсомольски районри колхозсем тырă вырас ĕçсем пуçланиччĕнех выльăх витисене тăмпа штукатурка туса, шуратса хунă. Вите маччине те çавăн пекех тăм сĕрсе питĕрме пулать. Хăшпĕр çĕрте питĕ лайăх витесенчех маччасем çук. Маччасăр витере выльăхсене хĕл каçарма мĕн тери йывăрри çинчен калаçма та кирлĕ мар. Чылай çĕрте вите маччине сарма хăма çук тесе лараççĕ. Ку тĕрĕс мар, вите маччине вĕрлĕксемпе те, çавăн пекех тата çатан çыхса тăм сĕрсе те сарма пулать.

Нумай колхозсенче выльăх витисен урай хăмисем айĕнче лакăмсем пур. Лакăмсене витери тислĕк шĕвекĕ пухăнса тăрать, çав тасамарлăх çĕрнипе витене выльăхсемшĕн сиенлĕ газсем тухса тăраççĕ. Кунпа пĕрлех çавăн пек лакăмсенче йĕке-хÿресемпе шăшисем йăва çавăрса йышлăн ĕрчесе каяççĕ. Ерекен чирсем пырса кĕрсен, урай хăмисем айĕнчи лакăмсем çав чирсене сарса тăракан вырăнсем пулса тăраççĕ. Çапла, Сăмахран, Кувакино районĕнчи «12 лет Октября»колхозра пăрусем темиçе çул хушши ĕнтĕ пĕр чирпех чирле-чирле вилеççĕ. Колхоза ветеринари врачĕсен, наука работникĕсен комиссийĕсем нумай хутчен пынă, пăрусене сыватас тесе темĕнле мерăсем те йышăннă, пăру витине кашнинчех тĕплĕн дезинфекциленĕ, пăру витин урайĕпе стенисене кашни кун вĕри кĕл тăррипе те çунă. Анчах çав ерекен чир пур пĕрех пĕтмен, пăрусем çаплах вилнĕ. Урайне уçса пăхма вара никамăн та ăс çитмен. Колхоза Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн главнăй ветеринари врачĕ Васильев юлташ пынă та урай хăмисене илсе пăхма хушнă. Урай хăмисем айĕнче пысăк лакăм пулнă, унта çулсерен пылчăк пухăнса пынă, ăна никам та тасатман. Пăрусене пĕтерекен усал чирĕн йăви çавăнта пулнă та ĕнтĕ. Çав лакăма тасатса питĕрсен тин, пăрусем чирлеме пăрахнă.

Мĕнпур выльăх витисенче урай хăмисем айĕнчи тасамарлăха тата çиелти тăпрана пĕтĕмĕшпех тасатса кăлармалла, вара çĕнĕрен урай сарас умĕн унта тăм çăрса лайăх пирчетсе тултармалла, урай хăмисене вара çав тăм çине таччăн сарас пулать.

Кайăк-кĕшĕк тата сурăх витисенче урайне пĕтĕмпех тăм сарса тума пулать. Сысна витисенче вара урайне ун пек тума юрамасть, тухса çÿремелли çулсене кăна тăм сарма юрать. Лаша витисенче те йывăç урай пулмалла, анчах йывăç тупăнмасан, урайне тăмпа вакă чула хутăш çăрса сарма пулать.

Витесенчен тасамарлăхсене юхтарса кăларма канализацие йĕркене кĕртмелле, вите тулашĕнче тасамарлăхсем пухăнмалли лакăмсем тумалла. Выльăх витисенче нумайĕшĕсенче усал сывлăшсем тухса тămалли трубасем çук, е вĕсем пур пулсан та, начар тунă пирки, сывлăша пачах та туртмаççĕ, çавăнпа витери сывлăш начар усăлать. Сывлăша усăлтарса тăманнине уйрăмах сыснасем тÿсеймеççĕ. Усăлтарман витере сывлăш нÿрелсе, йывăрланса каять, çавна пула сыснасем ревматизмпа тата ытти чирсемпе чирлеççĕ.

Выльăх витисене хĕле хатĕрленĕ чухне шалти оборудование лайăх йĕркелесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Сысна витинче ама сыснана çурисемпе пĕрле хупса усрамалли ятарласа хутса ăшăтакан пÿлĕм тăвас пулать. Кашни выльăх витинчех ама выльăхсене пăрулаттармалли ятарласа тунă отделенисем пулмалла. Пăру витисенче пăрусене уйрăмшарăн тата пысăк мар ушкăнсемпе хупса усрамалли читлĕхсем тăвас пулать. Сурăхсене тăвăр та пăчăх витере тытсан, вĕсем апат начар çиеççĕ тата çăм сахал параççĕ. Сурăх витисене кашни çитĕннĕ сурăх пуçне пĕр тăваткăл метртан кая мар лаптăк тивĕçмелле тăвас пулать. Сурăх вити патĕнче сурăхсене кăларса усăлтармалли картиш пулмалла, çав картишĕнче, сурăхсене хĕллехи ăшă кунсенче апатлантарма лупасайсем тăвас пулать. Çавăн пекех пĕтĕ сурăхсене тата ĕмĕртекен сурăхсене тытса усрамалли уйрăм читлĕхсем пулмалла.

Лаша ĕçре вăйлă пуласси ăна мĕнле витере тата мĕнле пăхса усранинчен нумай килет. Лайăх витере лаша лайăх канать, ĕçре те паттăр пулать. Лаша витисене тултан та, шалтан та тĕплĕн юсамалла. Лаша тăмалли станоксем, лашасене кăнтăрла çÿретмелли картишсем, тăрантармалли вăлашкасемпе куритесем, вите алăкĕсемпе вĕсен питĕрмеллисем, апат-çимĕç усрамалли ларсем тата ыттисем те, — пурте йĕркеллĕ пулмалла. Тихаллă кĕсресемпе айăрсене кăнтăрлахи вăхăтра уйрăмшарăн кăларса усăлтармалли вырăнсем тăвас пулать. Ут тавраш̆ĕсене усрама ятарласа хутса ăшăтмалли çуртсем туни кирлĕ е киввисене юсас пулать. Çав çуртсенче ут тавраш̆ĕсене тепре кÿличчен лайăх типĕтме май пултăр. Хăшпĕр колхозсенче ут тавраш̆ĕсем хумалли çуртсем çук пирки, вĕсене, типĕтме тесе, колхозниксене киле парса яраççĕ, кайран вара çав ут тавраш̆ĕсем час-часах колхозниксем патĕнчех юлаççĕ. Çакă вăл ялхуçалăх артелĕн уставне пăсни пулать. Ут тавраш̆ĕ колхозăн обществăллă пурлăхĕ пулса тăрать, ăна колхоз çуртйĕрĕнчех усрамалла.

(Юлашки çитес номерте пулать).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
ПАЯН
сентябрĕн 17-мĕшĕнче
ЮЛАШКИ ХУТ
кино-повесть
«ВЫБОРГСКАЯ СТОРОНА»
кăтартать.

Сентябрĕн 18-мĕшпе 19-мĕшĕнче
илемлĕ комеди
«ВРАТАРЬ»
кăтартаççĕ.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать.
Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ уйрăм çынсемпе организацисенчен сыпман улмуççи çинче пулнă панулмисем, шăлан çырли, [illegible] [illegible], [illegible]пасем, тĕрлĕ çырласем йышăнать. Çав япаласене паракансене конфет йышши таварсем, тăвар, супăнь тата ытти продуктсем те парать. Адрес: г. Чебоксары, ул. Совхозная, 1.

Чăвашсен педагогика институчĕпе учитель институчĕ пур тăватă факультетăн та —истори, чĕлхепе литература (вырăс отделенийĕпе чăваш отделенийĕн), физикăпа математика, естественнăй наукăсемпе географи факультечĕсен 1-мĕш курсне вĕренме илет.

Заявленисене сентябрĕн 25-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Вĕсене çак адреспа ямалла; гор. Марпосад, Чувашская АССР, Пединститут, директору.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00695. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.